# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

79 (7719) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи октябрĕн (юпа) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Октябрĕн 5-мĕшĕ – Раççейри Учитель кунĕ**



## Раççей шайĕнче палăрчĕ

*Татьяна Владимировна Ермакова Юнкăри вăтам шкулта 1989 çултанпа вăй хурать. Биологи предметне ертсе пырать вăл, ачасене биологипе кăна мар, экологипе те тарăн пĕлӳ пама тăрăшать. Пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ шкул лесничествин ĕçхĕлне те йĕркелесе пырать. Акă нумаях пулмасть иртнĕ республикăри шкул лесничествисен слетĕнче унăн вĕренекенĕсем иккĕмĕш вырăна тухрĕç. Пĕтĕмĕшле патшалăх экзаменĕсенче те биологи предметне суйласа илнĕ вĕренекенсем лайăх результатсемпе савăнтараççĕ.*

*Татьяна Владимировнашăн кăçалхи çулăн чи пысăк награди вара – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн грантне çĕнсе илни. Çакăн пек хастар та пултаруллă учительсем татах та нумай пулччăр районта.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ВĔРЕНТӲ ĔÇĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире чун-чĕререн професси уявĕпе – Учитель кунĕпе саламлатăп!

Ял шкулĕсенче питĕ пысăк ăс-тăн потенциалĕ пуррине ӳстерсе каламасăрах çирĕплетме пулать. Эсир тăрăшнипе, сирĕнте ответлăха туйса ĕçлес ен пуррипе паянхи шкулсем аталанса пыраççĕ те. Çĕршыври вĕрентӳ ĕçĕн чи лайăх йăлисем упранаççĕ.

Сирĕн çине тиенекен ответлăх чăннипех те пысăк. Паянхи общество учительтен нумай тата çирĕп ыйтать. Сирĕн ĕç ытти ĕçсенчен самаях йывăр. Ăна пурнăçлама вара чăтăмлăх, профессие юратни кирлĕ.

Эсир çитĕнекен ăрушăн тимлетĕр. Çак пархатарлă ĕçшĕн сире тав сăмахĕ калатăп. Çирĕп сывлăх, çемьере тăнăçлăх, хăвăрăн пултарулăхра ăнăçу, малашлăха шанчăклăн та çирĕппĕн пăхма сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

**ХАКЛĂ УЧИТЕЛЬСЕМ!**

Сире, пархатарлă профессие суйласа илнисене, Учитель кунĕпе чĕререн саламлатăп!

Учитель вăл – эпир хамăрăн ачасене воспитани пама шаннă çын. Вăл вулама, çырма, шутлама вĕрентет. Вăл ачасем ăнланулăха, тĕрĕслĕхе, ответлăха тата хастарлăха хăйсем çинче туйса ӳсчĕр тесе тăрăшать. Вĕрентесси, воспитани парасси тата юратасси – акă вăл учитель. Учитель кунĕнче вара эпир пурте тав сăмахĕ калатпăр вĕсен ĕçĕшĕн. Вĕсем хăйсен чун ăшшине кашни ачана валеççе панăшăн.

Сире, учительсем, сывлăх, тăнăçлăх, ĕçре çитĕнӳсем, тулли телей тата нумай çул пурăнма сунатăп.

**РФ Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Раççей Геройĕ Н.М. БУДАРИН летчик-космонавт.**

## Учитель тăрăшсан унăн сумĕ те çĕкленĕ

***Таврана кĕрхи илем тĕсĕ çапнипе пĕрле учительсен уявĕ те çывхарать. Шкулта ĕçлекен педагогсемпе ачасемшĕн те яланах савăнăçлă та кĕтнĕ уявсенчен пĕри вăл.***

***Учительсен кунĕ умĕн эпир редакци тĕпелне район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине Зоя Юрьевна ДИПЛОМАТОВАНА чĕнтĕмĕр.***

**– Зоя Юрьевна, Учительсен кунĕ ячĕпе саламласа малалла ĕçлеме вăй-хал, сывлăх сунатпăр. Салампа пĕрлех вара сирĕн пата ыйтусем те çук мар. Паян учитель пирки, унăн ĕç пахалăхĕ çинчен нумай калаçаççĕ. Мĕнле ырă енсем пулмалла-ха паянхи учительте? Пурнăç хумĕ мĕнле пулма ыйтать вĕсене?**

– Саламланăшăн тавах. Чăнах та пурнăç улшăнса пынă çемĕн вĕрентӳ ĕçĕн те çак улшăнусенчен юлса пымалла мар. Çĕннине алла илсе, малтанхи ырă та пахалăхлă йăласене манмасăр ĕç шайне ӳстерессипе тимлемелле учительсен. Паянхи учителĕн вара чи малтанах ăс-тăн аталанăвĕ, унăн анлăлăхĕ малта пулмалла. Учителĕн хăйĕн предмечĕпе тарăн пĕлӳ пулни çителĕксĕр, ытти енсемпе те унăн тавракурăмĕ анлă пулмалла. Çынпа хутшăнма пĕлмелле, тараватлă та ăста пулмалла вĕрентекенĕн. Хăйĕн вĕрененекенĕсемшĕн тĕслĕх пулса тăмалла. Пултарулăхĕ, ырă кăмăлĕ, çивĕчлĕхĕ кашни утăмрах пулмалла. Пултарулăха тĕрлĕ конкурссем урлă кăтартма тăрăшмалла. Пĕр вырăнта тăмалла мар. Ӳсмелле. Интерактивлă мелсене, хальхи технологисене алла илсе вĕсене вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче туллин усă курма пĕлмелле. Çулсеренех «Вĕрентӳ» нацпроектра палăртнипе классем çĕнĕ йышши оборудованипе, сĕтел-пуканпа, курăмлăх материалĕсемпе пуянланаççĕ. Ачасен пĕлĕвне çӳллĕрех шая хăпартма та, пурнăç ыйтнă пек ĕçлеме те майсем пур паян шкулсенче.

**– Çамрăк учителĕн хăйĕнпе ачасем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе яма мĕнлерех майсем пур шкулта?**

– Ман шутпа çамрăк учительсене çак çыхăнăва йĕркелесе яма çăмăлрах пек туйăнать. Мĕншĕн тесен çамрăк учитель паянхи ачасене, вĕсен тавракурăмĕ мĕнлерех пулнине лайăхрах та пĕлет. Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчен вĕренсе тухакансене ку ĕç ытлашшиех йывăр мар пулĕ тетĕп. Мĕншĕн тесен çак аслă пĕлӳ паракан шкулта асăннă проблемăпа тарăннăн ĕçлеççĕ. Шкулсенче вара паян, пĕтĕмĕшле илсен, учительсенчен 60 процентне яхăн 20 тата ытларах çул ĕçлекенсем вăй хураççĕ. Апла пулсан вĕсен сĕнĕвĕсем, вĕрентӳри тĕслĕхĕсем çамрăксене пулăшмаллах. Пĕр-пĕрне пулăшса пыни çеç кирлĕ.

**– Çамрăк специалистсемпе вара районти вĕрентӳ ĕçĕнче лару-тăру мĕнлерех?**

– Йывăртарах тесен йăнăш мар. Ĕç стажĕ 5 çул, унтан та сахалраххисем паян шкулсенче пĕтĕмĕшле те 6 процента яхăн çеç. Кăçал районти шкулсене пурĕ те 7 çамрăк учитель ĕçлеме вырнаçрĕ. Маларах асăннă «60 процент» çак вĕрентекенсене ĕçре пулăшса пырасса шанатăп.

**– Иртнĕ ĕмĕрте сумлă шутланнă учитель ĕçĕ паян сирĕн шутпа мĕнлерех?**

– Вăл вăхăтра учитель ялти чи хисеплĕ те аслă çын шутланнă. Мĕншĕн тесен çынсем ытларах чухне унран сĕнӳ-канаш ыйтма пынă-çке. Халĕ вара лару-тăру улшăнчĕ. Информаципе çынсене учитель кăна тивĕçтермест вĕт. Масăллă информаци хатĕрĕсен вăйĕ питĕ пысăк та витĕмлĕ. Çавăнпах учителĕн статусне те çӳле çĕклеме йывăр. Анчах та патшалăх тĕрлĕ программăсене пурнăça кĕртсе çак пулăма аталантарма тăрăшни курăнать. «Вĕрентӳ» наци проекчĕн тĕрлĕ подпрограммисенче учителĕн сумне хăпартасси тивĕçлĕ вырăн йышăнать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Октябрĕн 5-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери врач кунĕ**



*Муркашпа Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕсенче пурĕ 88 врач куллен ĕçе тухать. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Э. Фомина райтерапевт (больницăра 1992 çултанпа, паян 1-мĕш категориллĕ врач), Т. Шарикова эндокринолог (çамрăк врач больницăра 2005 çултанпа), васкавлă медицина пулăшăвĕн ертӳçи Н. Артемьева (1987 çултанпа ĕçлет, 1-мĕш категориллĕ врач) – Муркаш районĕнче ĕçлекен сывлăх хуралçисен пĕр пайĕ. Ыттисем пекех хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланипе палăрса тăраççĕ вĕсем. «Пĕтĕм тĕнчери врач кунĕ ячĕпе эпĕ паян хамăр патăмăрта ĕçлекен тата Муркаш районĕнчен тухнă врачсене саламлатăп. Пурне те çирĕп сывлăх сунатăп! Ĕçре те, çемьере те Сирĕн килĕшӳ хуçалантăр!» – терĕ районти тĕп врачĕ тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Данилов.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Раççейре**

## Чăваш Енре пурнăçлакан проектсем пĕтĕм Раççейшĕн пĕлтерĕшлĕ

Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров РФ Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Игорь Шувалов чĕннипе юн кун «РЖС фончĕн пирвайхи çĕр аукционĕсем: çĕнĕ тренд пуçламăшĕ» пресс-конференцие хутшăннă, вăл Мускавра «Новости» информагентствăра иртнĕ. Журналистсен ыйтăвĕсене çавăн пекех Федерацин пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшакан фончĕн генеральнăй директорĕ Александр Браверман, Тюмень облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Владимир Якушев тата ыттисем хуравланă. МИХсен представителĕсемпе пысăк пĕлтерĕшлĕ темăсем пирки калаçнă. Çав шутра – федерацин усă курман е япăх усă куракан çĕр лаптăкĕсене экономкласс çурт-йĕрне тума тĕп резерв вырăнне хурса çаврăнăша кĕртмелли механизм, РЖС фончĕ тата федераци субъекчĕсем рынока çĕнĕ продукт – инфратытăмпа, çурт-йĕр тумалли документсен тата финанс условийĕсемпе тивĕçтернĕ çĕр лаптăкĕсем – кăларас енĕпе пĕрле ĕçлесси.

Аса илтерни вырăнлă: Чăваш Ен Раççейри регионсем хушшинче пирвайхисен шутĕнче Федерацин пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшакан фончĕн проектне хутшăнать. Авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче аукцион иртнĕ, унта çурт-йĕр тума Шупашкарти 6,31 гектарпа танлашакан лаптăка арендăна памалли килĕшӳ тумалли правăна сутлăха кăларнă. Тăвată организаци хушшинче «Тус» АХО çĕнтернĕ. РЖС фончĕ пулăшнипе çак компани строительство ĕçĕсене пурнăçлĕ, кунта, малтанлăха палăртнă тăрăх, 100 пин тăваткал метр ытла çурт-йĕр тума май пур. «Эпир çак стройкăпа проект вĕçленичченех – аукцион ирттернинчен пуçласа уйрăм çынсем харпăрлăх правине регистрациличчен - ĕçлĕпĕр. Чăваш Енре пухнă опыта пĕтĕм Раççейĕпе сарăпăр», - тенĕччĕ фонд гендиректорĕ А. Браверман Чăваш Енре визитпа пулнă май.

**Саламлатпăр**

**ЧУМАНКАССИНЧИ ВĂТАМ ШКУЛТА ĔÇЛЕКЕН ХИСЕПЛĔ УЧИТЕЛЬСЕМ!**

Сире Учитель кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Пире ăс панăшăн, тавракурăма аталантарма пулăшнăшăн, воспитани парса тимленĕшĕн сире пурне те чĕререн тав тăватпăр.

Яланах ырă кăмăллă, çирĕп сывлăхлă пулма сунатпăр сире. Эсир пултаруллă, хастар та мал ĕмĕтлĕ пулни пире те çав çулпах пыма хистет. Ĕçри ӳсĕмсен çулĕ такăр пултăр, пире паракан юратăва кашни ача кусĕнчех туймалла пултăр сирĕн. Çемйĕрсенче тăнăçлăхпа телей хуçаланччăр.

**Саламласа та ырă сунса Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем.**

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**